24-меш çул тухать. Хакё 15 пус.

1941
СЕНТЯБРЬ
13
ШАМАТКУН
216 (5931) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пётём тёнчери пролетарисем, пёрлешёр!

ВКП(б) ОБКОМЁПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧЁН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧЁН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧЁН ХАҪАЧЁ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМЁН УКАЗЁ

Хёрлё Çарăн начальство составне Совет Союз Геройён званине парасси çинчен

Германи фашизмне хирёç пыракан кёрешӳ фронтёнче Командованин боевой заданийёсене кăтартуллăн пурнăçа кёртнёшён тата çак ёçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, **Ленин** орденё тата **«Золотая Звезда»** медалё парса, çаксене **Совет Союз Геройён** званине парас:

1. Подполковник **Батраков** Матвей Степанович.
2. Полковник **Некрасов** Иван Михайлович.

СССР Верховный Совет Президиумён Председателё М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумён Секретарё А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти сентябрён 11-мёш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМЁН УКАЗЁ

Авиаполк командирне А. А. Ложечников майора тата авиаэскадрилья командирне старший лейтенант С. Ф. Мошковскине Совет Союз Геройён званине парасси çинчен

Германи фашизмне хирёç пыракан кёрешӳ фронтёнче Командованин боевой заданийёсене кăтартуллăн пурнăçа кёртнёшён тата çак ёçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, **Ленин** орденё тата **«Золотая Звезда»** медалё парса, çаксене **Совет Союз Геройён** званине парас:

1. Майор **Ложечников** Андрей Александрович.
2. Старший лейтенант **Мошковский** Степан Филиппович

СССР Верховный Совет Президиумён Председателё М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумён Секретарё А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти сентябрён 11-мёш.

Хёрлё Çарăн высший начальство составне çар званийёсем парасси çинчен

ССР Союзён Халăх Комиссарёсен Совечё йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзён Халăх Комиссарёсен Совечё **çапла йышăнать:**

Фронтра çапăçу ёçёсене отлично ертсе пынăшăн çаксене СССР Верховный Совечён Президиумё 1940 çулти майăн 7-мёшёнче кăларнă Указпа çирёплетнё çакăн пек çар званийёсем парас:

ГЕНЕРАЛ-ПОЛКОВНИК ЗВАНИНЕ ÇАКСЕНЕ ПАРАС:

Еременко Андрей Иванович.
Конев Иван Степанович.

ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНТ ЗВАНИНЕ ÇАКНА ПАРАС:

Рокасовский Константин Константинович.

ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ ÇАКСЕНЕ ПАРАС:

Доватор Лев Михайлович.
Микульский Семен Петрович.
Плиев Исса Александрович.

ТАНКОВАЙ ВОЙСКАСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРЁН ЗВАНИНЕ ÇАКСЕНЕ ПАРАС:

Асейчев Анатолий Алексеевич.
Воейков Николай Иванович.
Копцов Василий Алексеевич.

ССР Союзён Халăх Комиссарёсен Совечён Председателё И. СТАЛИН.
СССР Халăх Комиссарёсен Совечён Ёçёсен Управляющийё Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль.
1941 çулти сентябрён 11-мёш.

Хёрлё Çарăн сывлăш çар вăйёсен начальство тата рядовой составне СССР Союзён орденёсемпе тата медалёсемпе наградăлани

Германи фашизмне хирёç пыракан кёрешӳ фронтёнче Командованин боевой заданийёсене кăтартуллăн пурнăçа кёртнёшён тата çак ёçре хăюллăхпа хастарлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совечён Президиумё 1941 çулти сентябрён 11-мёшёнче кăларнă Указпа:

Ленин орденёпе—5 çынна,
Хёрлё Ялав орденёпе—101 çынна,
Хёрлё Çăлтăр орденёпе—63 çынна наградăланă. (ТАСС).

Граждăнла Сывлăш Флочён работникёсене СССР орденёсемпе тата медалёсемпе наградăлани

Германи фашизмне хирёç пыракан кёрешӳ фронтёнче Хёрлё Çар Командованийён боевой заданийёсене кăтартуллăн тата паттăррăн пурнăçа кёртнёшён тата çак ёçре хăюллăхпа хастарлăх кăтартнăшăн Граждăнла Сывлăш Флочён работникёсен группине СССР Верховный Совечён Президиумё 1941 çулти сентябрён 11-мёшёнче кăларнă Указпа наградăланă.

Хёрлё Ялав орденёпе—16 çынна,
Хёрлё Çăлтăр орденёпе—28 çынна,
«За отвагу» медальпе—11 çынна,
«За боевые заслуги» медальпе—3 çынна наградăланă. (ТАСС).

Ирёке кăларнă Ельня хулинче

ЕЛЬНЯ, сентябрён 11-мёш. (ТАСС). Ельня хулинче пурăнакансем çёр мучасенчен тухнă, вёсем унта 6 эрне хушши нимёçсенчен пытанса пурăннă. Фашистсем хулана ишёлтернё тата çаратнă пулсан та, пушарсен юлашкийёсем мăкăрланаççё пулсан та—пурте хаваслă, шухăш-кăмăлёсем праздник чунехи пек. Хёрлё Çар пысăк çёнтерӳ турё—Ельня каллех совет хули пулса тăчё. Заречьери рабочисем çапла калаççё:

— Пурнё те çёнёрен тата лайăхрах тăваткăр!..

Пур енчен те халăх лашасемпе, çурран хăйён тăван хулине каялла тавраннать. Вёсенчен чылайёшёсем çук ёнтё, фашистла тискер-кайăксем нимён айăпсăр мирлё граждăнсене пере-пере вёлернё. Çёвё çёлекен артель членёсем Х. тата Э. Романовскисем çапла каласа параççё:

— Эпир пирён тăвансене—К. Шарафана тата Р. Иш ватă стариксене фашистсем çёр мучасенчен туртса кăларса, вёсем еврей пулнăшăнах перспе пăрахнине куртăмăр. Смоленск патёнчен килнё хёрарăма та çавăн пекех перспе пăрахнă. Ана хăйён ачисем умёнче перспе вёлернё. Вуникё çулхи Таня И. хёрачана фашистла ирсёрсем малтан ирёксёрленё, кайран перспе пăрахнă. Кочегар-стахановеца Турейковича нимёç полкён штабне илсе кайнă, унта ăна тискер-кайăкла асаплантарнă.

Нимёçсен офицерёсем пёр шкула çёмёрсе тăкнă, унта вёсем публичнăй çурт тунă. Фашистла «культурăн» çах çуртёнчен каçсерен хёрарăмсен чуна тивекен сассисем илтённё, ёçсе ӳсёрёлнё бандитсем пăшалтан пенё сасăсем янăраса тăнă.

Вырăнти больницăри чирлё çынсене унтан кăларса ывăтнă—ăна вите туса хунă.

Халё хулара пурнăç йёркеленсе пырать. ВКП(б) райкомё, ёççынни депутатёсен райсовет исполкомё, совет учрежденийёсем, общественнăй организацисем ёçлеме тытăннă.

Партипе совет активён районри пухăвё пулса иртнё. Нумайёшёсем пухăва тӳрех партизанла отрядсенчен килнё. Актив хуçалăха йёркелесси тата фронта пулăшасси çинчен сӳтсе-явнă.

Районра тырпулсене уйран пуçтарса кёртсе пётереççё, кёрхи тырăсене акаççё. Чи малтан ирёке кăларнă уйхире Сталин, Киров ячёпе тăракан тата «Свободный труд» ялхуçалăх артелёсем тухнă.

Халё хулара тата унăн таврашёнче йёркелёх тăваççё. Хёрлё Çар чаçёсем Ельняран аякра тăшмана çёмёреççё.

Ютçёршыв Ёçёсен Халăх Комиссариатёче

Сентябрён 10-мёшёнче Ютçёршыв Ёçёсен Халăх Комиссарё В. М. Молотов юлташ Болгари посланникне г-н Стаменова йышăнса, Болгари правительствине Совет Правительстви ячёпе çакăн пек представлени тунă:

«Ютçёршыв Ёçёсен Халăх Комиссариачё Совет Правительстви хушнипе Болгари правительствине çакăн çинчен пёлтерме тивёç тесе шутлать:

Германия ССР Союзё çине ултавлăн килсе тапăнничченех-ха Болгари правительстви Совет Союзё тёлёшпе, Болгария ССР Союзё çине лойăльно тата туслă та пăхать имёш тесе, Болгари правительстви хăй официально ёненterсе каланипе килёшсе тăман позици йышăннă. Совет Правительстви хăй вăхăтёнче Болгари правительствине çак обстоятельство çине: çав позици икё çёршыв хушшинчи йёркеллё отношенисене хирёç пырать тесе, пёрре кăна мар кăтартса панă, тата çавăн пек пачах та юрăхсăр положенине сирсе ярас тесе çине тăнă. Болгари правительстви Совет Союзё тёлёшпе туслă мар позици тытни ирки Совет Правительстви Болгари правительствине ёнтё кăçалхи январён 14-мёшёнче, февралён 4-мёшёнче, февралён 20-мёшёнче тата ытти чылай тёлсенче кăтартса панă.

Болгари правительстви ССР Союзё çине туслă мар пăхни, тата куntан та ытларах, лойăльно мар пăхни гитлерла Германия Совет Союзё çине килсе тапăннă хыççăн татах та ытларах вăйланчё.

Совет правительствин аллинчи даннăйсем, Болгария юлашки вăхăтра Германи, Итали, Румыни тата СССР çине килсе тапăннă ытти государствăсем енчен Совет Союзне хирёç вăрçă ёçёсене сарса пымалли плацдарм пулса тăма тытăнни çинчен каласа параççё, кăçалхи çуркунне Болгария, Грецине, те, Югославине те, вёсене хирёç вăрçăна тухни çинчен формально пёлтермесёр, хăйён территорине Германипе Италине Греципе Югослави çине тапăнса кёмелли база вырăнне парса, Германипе Италишён çавăн пек тапăнмалли плацдарм пулса тăчё. Совет Правительствин аллинчи мёнпур фактсем, хальхи вăхăтра Болгария Германипе унăн союзникёсемшён, Одесса, Крым тата Кавказ çине килсе тапăнас ёçре Болгари территорийёпе усă курса, Совет Союзё çине вăрçăна тапăнмалли плацдарм пулса тăни çинчен пёр иккёленмелле мар сирёплетсе каласçё.

Çакна ăна çакăн пек фактсем кăтартса параççё:

1. Болгари территорийёнче нимёçсен тата Италин дивизийёсем пухăнса тăраççё, вёсен шучё ӳссех пырать, вёсене Одессăпа Крыма хирёç десантлă операцисем тума пухаççё.

2. Болгарири аэродромсенче Германин çар авиацийё пухăнса вырнаçса пырать тата Болгари аэродромёсене Германин çар влаçёсем контроль туса тăраççё.

3. Болгарин Хура тинёс çинчи порчёсене—Варнăпа Бургаса Германипе Италине подводнăй лодкисене тата çар судсене вырнаçтарса тăратма майлаштарса йёркеленё.

4. Болгарин Хура тинёс çинчи (Варна, Бургас) порчёсенчи пекех, Болгарин Дунай çинчи Рущук портёнче те Германипе Италин çар суднисемпе подводнăй лодкисем, çавăн пекех Германипе Италин çар тата тинёс-çар чаçёсем пухăнса пыраççё.

5. Германин хальхи вăхăтра Болгарине пынă Редер адмиралё тата Германи тинёс-çар штабён ытти представителёсем Совет Союзне хирёç вăрçă операцийёсем хатёрлеме Германипе Болгари подводнăй лодкисенчен тата çар суднисенчен Хура тинёс çинче çар флочё организацилес тёлёшпе ёçлеççё.

6. Болгари чугунçулёсем Германин çар тата тинёс-çар чаçёсене, çавăн пекех Германин çар материалёсене турттарас тёлёшпе ёçлеççё.

7. Германи влаçёсем Германин войскисемпе çар материалёсене куçарма Рущук тёлёнче Дунай урлă понтоннăй кёпер тунă та унпа усă курараççё.

Болгари правительстви, Болгари территорийё çине совет самолечёсем çинчен бомбăсем пăрахнă тесе, çакă вăл пачах тёрёс мар тата элеклё япала пулса тăрать пулсан та, Совет правительстви темиçе хутчен те татăклă опровержени панă пулсан та, Совет Союзне пёрре кăна мар айăплама хăтланни, сентябрён 7-мёшёнче Болгари солицин центрёнче совет çар атташин помощникё çине провокациллё шутпа пăшалпа пени тата Болгарире Совет Союзне хирёç туса пыракан ытти тёрлё провокацилле актсем,—Болгарин официозлă печатёнче Совет Союзне хирёç уççăнах туса пыракан тăшманла-вăрçăллă кампани пирки каламасассăн та,—çаксем вёсем пурте Болгари правительстви Совет Союзё тёлёшпе лойăльнăй отношени тытса пыманнине кăна мар, тата СССР Союзне хирёç туса пыракан провокацилле актсене хётёртсе пынине те кăтартса параççё.

Çак фактсем пурте, çавăн пекех юлашки вăхăтра Болгарире репрессилё çар йёрки питё васкавлăн туса хунине те, Болгари Германипе пёрле пёр каварлă пулса ССР Союзё çине килсе тапăнма хатёрленнине кăтартса параççё. Румыния пекех, Болгарирен гитлерла Германия Совет Союзне хирёç вăрçă ёçёсене туса пымалли, СССР çине Хура тинёс енчен килсе тапăнмалли плацдарм туса хунă.

Çӳлте кăтартнисене шута илсе, Совет Правительстви Болгари правительствине çак представленине пама кирлё тесе тата Болгари правительствин позицийёсемпе ёçёсем Совет Союзё тёлёшле лойăльно мар пулса тăнине, вёсем ССР Союзёпе йёркеллё сыхăну тытакан государствăн позицийёсемпе тата ёçёсемпе килёшсе тăманнине, çакă вăл, Совет Правительстви çирёппён ёненнё тăрăх, пёрешкелех Болгарин хăйён тата Болгари халăхён интересёсемпе те килёшсе тăманнине кăтартса пама кирлё тесе шутлат».

Пысăк награда

Германи фашизмне хирёç пыракан совет халăхён отечественнăй вăрçи кашни сехетрех фронтра та, тылра та геройсене çуратса кăларать. Çёршыв Хёрлё Çара чаплă боевой машинăсем парса тăрас, вёсен техникне çёнетсе пырас тёлёшпе мухтавлăн ёçлекенсене уйрăмах паллă тăвать.

Пёрремёш номерлё авиаци завочё совет самолечёсен строительствин сăпкийё пулса тăрать. Çёнё типлă самолетсен конструкцине туса кăларса, пёрремёш номерлё заводăн нумай пинлё коллективё хăй ёçлеме пуçланă çулсем хушшинче тăван çёршывăн обороninе тёреклетес тёлёшпе пысăк ёçсем туса ирттернё.

Кăçалхи январь уйăхёнче правительство завода Ленин орденёпе наградăларё, ун чухне коллектив çулталăк хушшинчи чаплă çитёнӳсем тума, Сталин юлташăн аслă ятне илме право илме тивёçлё пулма хăй çине обязательство илнё.

Отечественнăй вăрçăн йывăр кунёсенче коллективăн патриотла çёкленёвё вăйлансах пынă.

— Вăрçă пуçланнăранпа продукци туса кăларассине икё хут ӳстертёмёр,—тесе каласа парать Социализмлă Ёçён Геройё завод директорё Третьяков юлташ.

Заводра ёç тухăçлăхё пёрмаях ӳссе пырать. Двухсотник, трехсотник рабочисемпе работницăсен йышё кунран кун ӳсет.

СССР Верховный Совечён Президиумё коллектив ыйтнă тăрăх пёрремёш номерлё завода Сталин юлташ ятне панă.

Тата тепёр пысăк вклад

Çамрăксен Пётём Тёнчери XXVII кунё ячёпе пулнă комсомолецсемпе çамрăксен Пётём Союзри иккёмёш воскресникё чугунçул транспортёнче пысăк патриотизмпа тата производстăллă пысăк çёкленӳпе иртнё.

Транспорта хёлё кёме хатёрлес майпа ирттернё воскресникре 850 пин çын ытла хутшăнса ёçлесе, тăван çёршыв оборонин фондне 4 миллион тенкё ытла хывнă.

Воскресник кунёнче 491 паровоз, 2.050 вагон, 435 километр тăршшё çул, стрелкăсен 217 переводне, çула юртултарса лартасран, хӳтлемелли щитсене 14,5 пин штука юсанă, 25 пин кубометр çёр чавнă, юрăхсăра тухнă шпалăсене 14 пин штука, подкладкăсене, болтсене улăштарнă, 7 112 вагон товар тиесе пуштатнă, 8 663 тонна тимёртăмăр пухнă.

Воскресникре пулнисем кăтартуллăн ёçленё. Инçет-Хёвелтухăç çулё çинчи Облучье депори токарь Холманский юлташ 26,5 норма, комсомолка Раиса Кыштымова икё станокпа ёçлесе 17 норма тунă.

Итали самолетне персе антарнă

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрён 11-мёш. (ТАСС). Тăшман самолечёсем Х. ялё çине пырса тапăннă вăхăтра, пирён зенитчиксем тăшманăн виçё самолетне персе антарнă. Икё самолетăн экипажёсем вилнё, виççёмёш самолет çинчи летчик парашютпа çёр çине ансан, ăна пирённисем тытăкăна илнё. Вăл Итали çарёнчи старший лейтенант Нанин пулнă.

Нумаях пулмасть ăна мобилизацилесе «Капрони» ятлă самолетпа Германипе Румынин сывлăш-çар чаçне пулăшма илсе пынă.

Нанин сăмахё тăрăх, нимёçсем Итали летчикёсене йывăртарах тата хăрушăрах операцисене яраççё.

Халăх хăйён паттăр Хёрлё Çарёшён тимлён тăрăшать

Боецсем валли ăшă тумтирсем пухасси пётём республикипе анлăн сарăлса пырать

ÇЕМЁРЛЕ, сентябрён 12-мёш. **(Телефон тăрăх, хăмăр корр.).** Шупашкарти Ленин ячёпе тăракан фабрикăри рабочисемпе работницăсем Хёрлё Çар боецёсене ăшă тумтирсем парса пулăшма чёнсе каланине районри предприятисемпе колхозсенче анлăн сӳтсе-явaççё. Çак ыйтупа паян Турханти «Комбинат» колхоз членёсен пухăвё пулса иртрё. Пухура 200 колхозник ытла пулчё. Колхозниксем колхоз фондёнчен 25 мăшăр çăматă, сурăх тирё 40 штука пама йышăнчёç. Ялсовет председателё Тарасов юлташ пёр çёлёк, пёр мăшăр çăматă, ваткăллă фуфайка тата брюки, пёр килограмм çăм; колхоз председателё Макаров юлташ — пёр мăшăр çăматă, ваткăллă фуфайкăпа брюки тата çёлёк; колхозница Моисеева юлташ — пёр алшăлли, пёр килограмм çăм, ытçё метр пир; колхозник Зотов юлташ—пёр килограмм çăм, носки, çёлёк пама пулчёç.

Елена Косяковăн упăшки халь Хёрлё Çарта. Пухура вăл çапла каларё:

— Эпир Хёрлё Çара пур енёпе те пулăшма хатёр. Боецсем валли эпё пёр мăшăр носки, ваткăллă брюки, пёр мăшăр çăматă, алшăлли тата çёлёк паратăп, — терё.

«Комбинат» колхоз членёсем Хёрлё Çар боецёсем валли пётёмпе кёрёк пиншаксем 20 штука, 150 мăшăр çăматă, 100 килограмм çăм, сурăх тирёсем 200 штука, 30 мăшăр носки тата алшăисем, 300 метр пир, 10 фуфайка, ваткăллă брюкисем, 50 çёлёк пама пулчёç. Ку колхоз членёсем районри ытти колхоз членёсене те хăйсенчен пример илмелё чёнчёç.

* * *

ÇЕМЁРЛЕ, сентябрён 12-мёш. **(Телефон тăрăх).** Хулари коммунальнăй хуçалăхра ёçлекен Антонов юлташ Хёрлё Çар боецёсем валли хура тупкă кёрёк пачё. Çавнашкалах райпотребсоюз председателё Кузнецов юлташ та Хёрлё Çар боецёсем валли кёрёк пиншак пачё.

АНТОНОВ.

* * *

Сентябрён 11-мёшёнче Пионерсен Дворецёнче Шупашкар хулинчи кёрачасен пухăвё пулса иртнё. Пухăва хулари малта пыракан çамрăк хёрсем, производствăри стахановкăсем 300 çын ытла пуçтарăннă.

Пухăва ВЛКСМ обкомён секретарё П. Михайлов юлташ уçрё. Пуху пёр ыйту сӳтсе-яврё—мухтавлă Хёрлё Çар боецёсем валли ăшă япаласем хатёрлесси çинчен ВЛКСМ обкомён секретарё А. Башкирова юлташ доклад туса пачё. Доклад хыççăн çамрăк хёрачасем Хёрлё Çар валли ăшă япаласем хатёрлес ёçре хăйсем мён тума пултарни çинчен тухса каларёç. Тёрё тёрлекен артель председателё комсомолка А. Делицина, Ленин ячёпе тăракан фабрика директорё Бучельникова, пединститут студентки отличницă Михайлова юлташсем хăйсем Хёрлё Çар валли ăшă тумтирсем, алса-чулхасем, çёлёксем, ăшă кёпесем хатёрлесе пама пулчёç. Вёсен хăйсен коллективёсенчи рабочисемпе работницăсем, вёренекенсем те нумай ăшă япаласем хатёрлени çинчен каларёç.

Çавăн пекех государствăн çак пысăк ёçне мёнле йёркелесе ирттереcси çинчен, çак тёлёшпе комсомолкăсем, хёрачасем ёççыннисем хушшинче ăнлантаруллă ёç туса пыма тивёçли çинчен ВКП(б) хула комитечён секретарё М. Романова юлташ сăмах тухса каларё. Ун хыççăн СССР Верховный Совечён депутачё М. Хорунжия, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумён Председателё З. Андеева юлташсем тухса каларёç. Вёсем хёрачасен вăрçă вăхăтёнчи хастарлăхёпе геройлăхё çинчен, çавăн пекех Хёрлё Çар валли ăшă тумтирсем хатёрлес ёçре те пысăк вырăн йышăнса тăнине тёплён кăтартса пачёç.

Юлашкинчен пуху, пёр кăмăллă пулса, Хёрлё Çар валли ăшă тумтирсем хатёрлеме, вăл ёçре хёрачасем пысăк активлăхпа хутшăнма пулса решени йышăнчё.

* * *

ШАХАСАН, сентябрён 12-мёш. **(Телефонпа).** Районри пур учрежденисенче ёçлекенсем те Хёрлё Çар боецёсем валли ăшă тумтирсем хатёрлесе параççё. Шăхасанти вăтам шкул учителёсем, 22 çын, кашниех парнесем хатёрлеççё. Шкул директорё В. Нимаков юлташ боецсем валли кёрёх тума пёртир, ăшă çёлёк, пёр мăшăр кăçат, фуфайка, çăмран сыхса тунă пёр мăшăр алса, пёр мăшăр носки тата çăм чулха хатёрленё.

— Пирён çемьерен пиллёк çын Хёрлё Çар ретёнче—Германи фашизмне хирёç, хамăрăн тăван çёршыва пухăнса пынă. Боецсем валли эпё пёр мăшăр носки, ваткăллă брюки, пёр мăшăр çăматă, алшăлли тата çёлёк паратăп, — терё.

«Комбинат» колхоз членёсем Хёрлё Çар боецёсем валли пётёмпе кёрёк пиншаксем 20 штука, 150 мăшăр çăматă, 100 килограмм çăм, сурăх тирёсем 200 штука, 30 мăшăр носки тата алшăисем, 300 метр пир, 10 фуфайка, ваткăллă брюкисем, 50 çёлёк пама пулчёç. Ку колхоз членёсем районри ытти колхоз членёсене те хăйсенчен пример илмелё чёнчёç.

* * *

ÇЕМЁРЛЕ, сентябрён 12-мёш. **(Телефон тăрăх).** Хулари коммунальнăй хуçалăхра ёçлекен Антонов юлташ Хёрлё Çар боецёсем валли хура тупкă кёрёк пачё. Çавнашкалах райпотребсоюз председателё Кузнецов юлташ та Хёрлё Çар боецёсем валли кёрёк пиншак пачё.

АНТОНОВ.

* * *

Сентябрён 11-мёшёнче Пионерсен Дворецёнче Шупашкар хулинчи кёрачасен пухăвё пулса иртнё. Пухăва хулари малта пыракан çамрăк хёрсем, производствăри стахановкăсем 300 çын ытла пуçтарăннă.

Пухăва ВЛКСМ обкомён секретарё П. Михайлов юлташ уçрё. Пуху пёр ыйту сӳтсе-яврё—мухтавлă Хёрлё Çар боецёсем валли ăшă япаласем хатёрлесси çинчен ВЛКСМ обкомён секретарё А. Башкирова юлташ доклад туса пачё. Доклад хыççăн çамрăк хёрачасем Хёрлё Çар валли ăшă япаласем хатёрлес ёçре хăйсем мён тума пултарни çинчен тухса каларёç. Тёрё тёрлекен артель председателё комсомолка А. Делицина, Ленин ячёпе тăракан фабрика директорё Бучельникова, пединститут студентки отличницă Михайлова юлташсем хăйсем Хёрлё Çар валли ăшă тумтирсем, алса-чулхасем, çёлёксем, ăшă кёпесем хатёрлесе пама пулчёç. Вёсен хăйсен коллективёсенчи рабочисемпе работницăсем, вёренекенсем те нумай ăшă япаласем хатёрлени çинчен каларёç.

Çавăн пекех государствăн çак пысăк ёçне мёнле йёркелесе ирттереcси çинчен, çак тёлёшпе комсомолкăсем, хёрачасем ёççыннисем хушшинче ăнлантаруллă ёç туса пыма тивёçли çинчен ВКП(б) хула комитечён секретарё М. Романова юлташ сăмах тухса каларё. Ун хыççăн СССР Верховный Совечён депутачё М. Хорунжия, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумён Председателё З. Андеева юлташсем тухса каларёç. Вёсем хёрачасен вăрçă вăхăтёнчи хастарлăхёпе геройлăхё çинчен, çавăн пекех Хёрлё Çар валли ăшă тумтирсем хатёрлес ёçре те пысăк вырăн йышăнса тăнине тёплён кăтартса пачёç.

Юлашкинчен пуху, пёр кăмăллă пулса, Хёрлё Çар валли ăшă тумтирсем хатёрлеме, вăл ёçре хёрачасем пысăк активлăхпа хутшăнма пулса решени йышăнчё.

* * *

ШАХАСАН, сентябрён 12-мёш. **(Телефонпа).** Районри пур учрежденисенче ёçлекенсем те Хёрлё Çар боецёсем валли ăшă тумтирсем хатёрлесе параççё. Шăхасанти вăтам шкул учителёсем, 22 çын, кашниех парнесем хатёрлеççё. Шкул директорё В. Нимаков юлташ боецсем валли кёрёх тума пёртир, ăшă çёлёк, пёр мăшăр кăçат, фуфайка, çăмран сыхса тунă пёр мăшăр алса, пёр мăшăр носки тата çăм чулха хатёрленё.

— Пирён çемьерен пиллёк çын Хёрлё Çар ретёнче—Германи фашизмне хирёç, хамăрăн тăван çёршыва пухăнса пынă. Боецсем валли эпё пёр мăшăр носки, ваткăллă брюки, пёр мăшăр çăматă, алшăлли тата çёлёк паратăп, — терё.

— Пирён çемьерен пиллёк çын Хёрлё Çар ретёнче—Германи фашизмне хирёç, хамăрăн тăван çёршыва пухăнса пынă. Боецсем валли эпё пёр мăшăр носки, ваткăллă брюки, пёр мăшăр çăматă, алшăлли тата çёлёк паратăп, — терё.

Партипе комсомол райкомёсенче тата редакцинче ёçлекенсем боецсем валли ăшă кёпесем, свитрсем, фуфайкăсем, çёлёксем, носкисем, чулхасем, перчаткăсем т. ыт. те пама хатёрлеççё. Типографинчи наборщица Михайлова юлташсем çăмран чулха сыхать, техничка Федорова перчатка хатёрлет.

Хамăрăн паттăр боецсем валли хёлле тăхăнмалли ăшă тумтирсем хатёрлес ёç районри колхозсенче те анлăн сарăлса пырать.

С. ШАДИН.

* * *

ÇЕРПУ, сентябрён 12-мёш. **(Телефон тăрăх).** Район центрёнче колхоз председателёсен канашлăвё пулса иртрё. Канашлура Хёрлё Çар боецёсем валли ăшă тумтирсем парасси пирки Шупашкарти Ленин ячёпе тăракан фабрикăри работницăсем чёнсе каланине сӳтсе-явaççё. Колхоз председателёсем, пурте пёр саслă пулса, тăван Хёрлё Çара пулăшу парас ёçе колхозсенче анлăн сарса пыма йышăнчёç.

Сентябрён 12-мёшёнче ирхине, ёç пуçланас умён предприятисемпе учрежденисенче митингсем пулса иртрёç. Рабочисемпе служащисем мухтавлă красноармеецсене ăшă кёпе-тумтир, алса-чулхасем хатёрлесе пама йышăнчёç.

Госбанкра ёçлекен служащисем Хёрлё Çар валли ăшă тумтир илме 400 тенкё ытла укçа пухрёç.

Г. ПЕТРОВ.

* * *

СЕНТЁР, сентябрён 12-мёш. **(Телефонпа).** Юнга ялсоветне кёрекен колхозсем Хёрлё Çар боецёсем валли парнесем яраççё. Войков ячёпе тăракан колхозри çамрăксем Хёрлё Çар валли кашниех пёр мăшăр ăшă алшиш, пёр мăшăр çăм чулха пама пулчёç. Коракова юлташ пёр мăшăр перчатка, пёр алшăлли пачё. «Родина» колхоз членёсем Хёрлё Çар валли çăм чулхасем, перчаткăсем тата портянкăсем туса пама пулчёç. Колхоз чулха-носкисем сыхма 16 килограмм çăм уйăрса пачё.

НКВД райотделенинче ёçлекенсем ăшă фуфайкăсем, çаматăсем тата ытти çавăн пек ăшă япаласем пама пулчёç. Уйрăмах Павлов юлташ кёпе-йёмсем, Енушковăпа Сапткеева юлташсем пёр-пёр мăшăр перчатка пачёç. Чернов, Исаев тата ытти юлташсем те супăнь, бритва, одеколонсем илсе пачёç.

Район центрёнчи комсомолецсем Хёрлё Çар боецёсем валли 350 тенкёлёх парне ячёç. Халё вёсем ăшă кёпе-тумтирсем яма хатёрленеççё.

Шупуç ялсоветне кёрекен «Коммунар» колхозри виççёмёш бригада членёсем Хёрлё Çар боецёсем валли портянкăсем туса пама пулчёç. Колхозница Е. Косарева юлташăн виçё ывăлё Хёрлё Çарта.

— Манăн ывăлсем фронтра фашистсене хирёç паттăррăн çапăçни мана савăнтарать. Эпё вёсен çитёнёвёсемпе хёпёртетёп. Хёрлё Çарăн паттăр боецёсене хирёç паттăррăн çапăçни мана савăнтарать. Эпё вёсен çитёнёвёсемпе хёпёртетёп. Хёрлё Çарăн паттăр боецёсене портянка тума 9 метр пир паратăп, — терё вăл.

— Эпир Хёрлё Çара мён вăрçă пётичченех пулăшу парса тăма яланах хатёр. Хёрлё Çар çёнтерӳ тăвассине шансах тăратпăр, — теççё колхозниксемпе колхозницăсем.

Хёрлё Çар боецёсене валли парнесем яраç ёç колхозсенче кулленех сарăлса пырать.

С. НАЛИМОВ.

Нимёçсен десантне пётерсе тăкнă

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрён 11-мёш. (ТАСС) Н-ски чаçăн подразделени командирё старший лейтенант Лунтовский юлташ Днепр шывё çинчи Х. утрава фашистсен десантёнчен тасатма боевой задани илнё. Старший лейтенант утрав çинчи огневой точкăсене тата противникăн чёрё вăйне пётерсе тăкма йышăннă. Подразделени тăшман çине автоматсенчен, ручной пулеметсенчен пеме пуçланă. Çав вăхăтра тупăсемпе танковăй орудисем кёрлеме тытăннă. Фашистсем вăйлă вут-хёме чăтса тăраймасăр оборонăн малти линине пăрахса каялла чакнă.

Подразделени çаканпа хёвăрт усă курса, шыв урлă пёр çухатусăр каçса утрав çине тухнă. Вёсем вăйлăн атака тунипе нимёç десанчёсене пётёмпе пекех пётерсе хунă, чёррён тăрса юлнисене тыткăна илнё. Çапла вара Х. утрава пётёмпех фашистсенчен тасатнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 11-мĕшĕнчи каҫхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 11-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç вăйлăн çапăçнă.

Пирĕн авиаци çĕр çинчи войскăсемпе пĕрле кĕрешсе, противникăн мотомехчăсĕсене, пехотипе артиллерине пыра-пыра çапнă тата унăн аэродромĕсенче авиацине пĕтерсе пынă.

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче, зенитнăй артиллеристен персе тата противникăн аэродромĕсенче нимĕçсен 81 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 41 самолет пĕтнĕ.

* * *

Совет летчикĕсем нимĕçсен фашистла войскисене тата авиацине фронтăн мĕнпур участокĕсенче пыра-пыра çапаççĕ. Толсликов юлташăн чăçĕнчи летчиксем, çĕр çинчи чăссемпе пĕрле кĕрешсе, сентябрь уйăхĕнчи 10 кун хушшинче 15 танка, 100 ытла автомашинăна, 5 орудине, боеприпассем тиенĕ 25 повозкăна пĕтерсе тăкса стройран кăларнă, бензин тултарнă темиçе цистернăна çунтарса янă. Совет Союзĕн Геройĕ старший батальоннăй комиссар Костылев ертсе пынипе пикировка тăвакан бомбардировщиксен группи нимĕçсен артиллери батарейисене атакăланă. Тăшман батарейисем çине летчиксем пĕрин хыççăн тепри пикировка тунă. Бомбăсем çурăлнипе 12 ыйăр орудине пĕтерсе тăкнă. Штурмовой авиацин летчикĕ старший лейтенант Нахим Рейтер нимĕçсен аэродромне виçĕ хутчен çине-çинех атакăласа, противникăн самолечĕсемпе чĕркĕ вăйпе пĕтерсе тăкнă. Унăн самолетне персе шăтарнă пулнă тата каялла килнĕ чух çул çинче ун çине «Мессершмиттсем» тапăннă. Старший лейтенант умран пырса атакăлама пуçланă. Фашистсен пĕр истребителĕ, çапăçуран пăрăнса, вăрман çине пырса тăрăннă, тепри тарса пытаннă.

Белов юлташ командир пулса ертсе пыракан авиачасть фашистсен 96 самолетне персе антарнă тата çĕр çинче пĕтерсе тăкнă. Хăшпĕр летчиксем халех ĕнтĕ темиçешер самолет персе ӳкернĕ. Вĕсем хушшинче—10 бомбардировщикпе истребителе пĕтерсе тăкнă летчик-истребитель капитан Савченко, 8 самолета персе антарнă стрелок-радист Ткач юлташ. Хĕвеланăç енче çапăçакан подразделени летчикĕсем Боровченкопа Гибадулин юлташсем пĕр уйăх хушшинче пиллĕкшер самолет персе антарнă. Совет Союзăн Геройĕ Бринько юлташ Ленинград патне пымалли вырăнсенче 12 самолет персе ӳкернĕ.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енче çапăçакан пирĕн чăсем нимĕçсен артиллерипе тата пехотăпа вăйлатнă 47-мĕш танковăй корпусне йывăр çухату кӳнĕ. Хăшпĕр вырăнсенче пирĕн чăсем патне Подберезьеренкилекен шоссе çулĕ енчен пынă та, Дунаевра тăракан фашистла войскăсем çине пеме пуçланă. Пĕр-пĕрин çине хире-хирĕç вăйлăн пеме тытăннă. Фашистсем партизансене хирĕç кĕрешме виçĕ стрелковăй взвод янă. Çак вăхăтра Подберезье енчен нимĕçсен роти пырса çитнĕ. Вара партизансем пеме чарăннă та тарса пытаннă. Обстановкăна чухласа илеймесĕр, нимĕçсен икĕ отрячĕ те пĕр-пĕрин çине пулеметсемпе винтовкăсенчен пеме пуçланă. Фашистсем пĕр-пĕрне палласа иличчен нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 30 çын ытла вĕлернĕ.

Зоотехник Ж. юлташ командир пулса ертсе пыракан отряд Усвятово çине пырса тапăннă. Фашистсен 80 салтакне çити вĕлернĕ хыççăн, партизансем М. Смота юханшывĕ урлă хывнă кĕпере, боеприпассемпе продовольстви ураканă 3 склада взрыв туса аркатнă тата 6 грузовой автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Хĕçпăшалсем нумай турттса илнĕ хыççăн, партизансем саланаран тухса кайнă.

МТС бухгалтерĕ П. юлташ ертсе пыракан партизансен отряднăй боецсем Губана таврашĕнчи çул çине шĕвĕр тимĕр татăкăсем тата пăтасем пăрахса тухнă. Çул тăрăх пынă немĕç мотоциклисчĕсен отрячĕ малалла кайма сасартăк чарăннă, мĕншĕн тесен, çав шĕвĕр тимĕрсем çине тăрăннипе сахалтан та 20 мотоциклăн шинисем шăтнă пулнă. Фашистсем покрышкăсене улăштарса лартма пуçласан, вĕсем çине партизансем пырса тапăннă. Нимĕçсен 25 салтакне вĕлернĕ те, партизансем мотоциклсене тытса илсе тарса пытаннă.

* * *

Албание ирĕке тухассишĕн пыракан движени вăйлăрах та вăйлăрах сарăлать. Сентябрĕн 1-мĕшпе 2-мĕшĕнче Албани патриочĕсем Зергьянран çурçĕр еннерехре Италин 75 стрелокĕнчен тăракан карательнăй отрядне çапса салатнă тата горнăй орудисен батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Греции партизансем Италипе Германи захватчикĕсене хирĕç вăйлăн тăрăççĕ. Салоники портĕнче сентябрь уйăхĕнчи малтанхи 3 кун хушшинче Итали транспорчĕсем çинче икĕ пысăк пушар тухнă, çав транспортсене Италине яма хатĕрленĕ пулнă.

Пушарсем тухнă май Итали жандармерийĕ портсенче ĕçлекен грек рабочийĕсене 100 çын ытла арестленĕ. Çакна хирĕç ответлесе, грек грузчикĕсем забастовка тунă. Итальянецсен арестленисене ирĕке кăларма тивнĕ. Греции Пирей портĕнче итальянецсем кунта путнă пароходсене шыв тĕпĕнчен кăларма хăтланăççĕ. Çак кунсенче шыв тĕпĕнчен кăларса причалсем патне илсе пынă пароходсенчен пĕрине патриотсем вут чĕртсе каллех путарнă.

* * *

Фабрикăсемпе заводсенче двухсотниксен стахановла движенийĕ анлăн сарăлса пырать. Советăн çĕршер пин патриочĕсем фронта геройла пулăшаççĕ, хăйсен нормине кашни кун 200—300 процент тата ытларах та тултарăççĕ. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче Кировски заводри рабочисенчен нумайĕшĕ икшер тата виçшер норма парăççĕ. Марти ячĕпе тăракан заводри рабочи Александров юлташ тăтăшах виçĕ норма тултарать. Çамрăк токарь Зябко юлташ пĕр ĕçе 60 сехет хушшинче туса çитернĕ, малтанхи вăхăтра çак ĕçе тума 210 сехет кирлĕ пулнă. Ярославльри «Красный маяк» заводăн 5-мĕш №-лĕ цехĕнчи çамрăхсен группинче пур рабочисем те сменăра икшер норма парăççĕ. Работница Борисова юлташ норма тăрăх 68 вырăнне сменăра 200 шестерне касса хатĕрлет. Работница Маршова юлташ норма тăрăх 96 вырăнне 350 втулка сыпăçтарать. Облучье станцинчи депора ĕçлекен рабочи Ежов юлташ сменăра 5 норма тултарать. Куйбышевка—Восточная депора ĕçлекен работница А. Бакшеева сменăра вунă норма тултарать. Хабаровск—II паровоз деповĕнче ĕçлекен слесарьсем Стрельцовпа Гришаев юлташсем, электросварщик Худяков юлташ, токарьсем Бурденко, Суханов т. ытти нумай юлташсем кунсеренех 6—7 норма тăваççĕ. Çурçĕр çулĕн Буй станцинчи паровозсем юсакан депори рабочисем пурте пекех сменăра икĕ норма параççĕ. Депо токарĕ Кузьмин юлташ заданине 500—600 процент тултарать. Обточка цехĕнчи бондажник В. Никишин юлташ виçĕ станок çинче ĕçлеме пуçласа, хăйĕн пĕр кунхи нормине 600 процента çити тултаракан пулнă.

Виçĕ кун хушшинчи ĕç

ИШЛЕЙ. Çак кунсенче «Сĕнĕ хунав» колхоз колхозникĕсем питех те сахал ларса канаççĕ. Иртен пуçласа каç пуличченех ĕçре пулаççĕ. Кăвак шуçăмлах колхоз итемĕ çинче машина тата тăпачă сасси кĕрлеме пуçлать. Колхоз пăрça йышши культурăсене виçĕ кун хушшинче çапса пуçтарчĕ. Çав хушăрах 20 тонна ыраш çапрĕ. Виçĕ кун хушшинче 60 тонна силос хыврĕç. Татса кĕнĕ кантăра шыва кайса хутрĕç. Государствăна 2 тонна тырă леçсе панă. Çурхи тырăсене те йăлтах пуçтарса кĕртнĕ. Оборона фондне икĕ гектар çинчен пуçтарса кĕртнĕ тырăна государствăна леçсе панĕç.

Чылай колхозниксем ик-виçĕ çын тумалли ĕçсене пĕчченех туса пыраççĕ. Акă, А. Данилова юлташ молотилка патĕнче пучах суйланă çĕрте виçĕ çынтăн ĕçлет. А. Трофимов юлташ улăм ури хăлапртнă çĕрте икĕ çын ĕçлемелли ĕçе пĕччен туса пырать.

А. СМИРНОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçусем туса пынă.

* * *

Ленинград патне пымалли çулсем çинче çапăçакан Совет Союз Геройĕн, Торопкин полковникăн авиасоединенийĕни летчик старший лейтенант Осипов сентябрĕн 8-мĕшĕнче ирхине ирех тăшман аэродромĕ çинче «Юнкерс-87» тата «Мессершмитт-109» йышши 50 самолет ларнине тупса палăртнă. Ирхине 10 сехетре пирĕн самолетсен группи çак аэродром çине сисмен çĕртен вĕçсе пынă та, тăшманăн унта ларакан машинисене атакăланă. Совет летчикĕсем фашистсен 22 самолетне пĕтерсе тăкнă. 13 сехетре тăшман аэродромĕ çине Благовещенский майорăн чăсĕнчи самолетсен группи вĕçсе пырса тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе аэродромра калама çук пысăк пушар пуçланнă. Самолетсем, горючи тултарнă цистернăсем тата пурăнмалли çурт-сем çуннă.

Çав кунах авиачăсри летчиксем тăшманăн 50 автомашинине тата темиçе зенитнăй орудине пĕтерсе тăкнă. Ленинград патне пымалли вырăнсенче сывлăшра пулса иртнĕ çапăçусенче çав кун уйрăмăнах летчик старший лейтенант Гавринец хăйĕн хăюллăхĕпе хастарлăхне кăтартса панă. Тăшман самолечĕсен группине атакăласа, вăл пĕр «Мессершмитта» персе ӳкернĕ, унтан фашистсен тепĕр истребителĕ çине тапăннă. Нимĕç самолетне хăваласа çитсе Гавринец юлташ ăна хăйĕн машинин кĕлеткипе пырса çапнă. Фашистсен самолечĕ çĕре чул пекех татăлса аннă. Гавринец юлташ хăй сиенленмен.

* * *

Вăрçă тапраннă кунран пуçласах Дуденко майорăн артиллери полкĕ нимĕç фашисчĕсен йытăтăвĕсене хирĕç паттăррăн çапăçать. Полкри боецсем хальхи вăхăтра тăшман Днепр урлă каçма хăтланнисене пурне те аркатаарката пыраççĕ. Çапăçусен пĕр кунĕ хушшинче хăна полкри артиллеристсем противникăн темиçе батарейине, мотопехота колоннине тата грузовой машинăсен эшелонне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн салтаксем тиенĕ тата 12 станковăй пулемет вырнаçтарнă 3 катерне путарнă. Чугунев юлташăн батарейинчи наводчик Ларин фашистсен виçĕ орудине пĕтерсе тăкнă. Ларин юлташ пеме тытăнсанах нимĕç артиллерисчĕсем вăрманалла тарма пуçланă. Вăхăт нумаях та иртмен, персе çĕмĕрнĕ орудисем патне нимĕçсен тягач-тракторĕсем пынă. Икĕ залп персе çав тягачсене те çĕмĕрсе тăкнă. Сентябрĕн 5-мĕшĕнче Чугунев батарейи хăтласе тăнипе пыракан пирĕн пехота çине нимĕçсен ултă танкĕ тапăннă. Чугунçул тĕмески хыçне пытанса, вĕсем пирĕн пехота çине пеме пуçланă. Пирĕн батарея тăшманăн 4 машинине персе çĕмĕрнĕ, ытти танкĕсем каялла тарнă.

* * *

Гдов партизанĕсем хăюллăн çапăçса тăшманăн тылне деорганизацилеççĕ тата противникăн чĕрĕ вăйне пĕтере-пĕтере пыраççĕ. Юлашки виçĕ эрне хушшинче нимĕçсем Гдовпа Псков хушшинчи тата фронт линийĕнчи войскăсен соединенийĕсемпе чăсĕсен штабĕсем хушшинчи телефонпа телеграф сыхăнăвне йĕркелесе яма пултараймаççĕ. Гдоври спичка фабрикинчи рабочи Б. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ сентябрĕн 3-мĕшĕнче Подолешьене Добручи хушшинче вăрманта проводасене татса тăкнă. Вăхăт кăштах иртсен çак вырăна Германи связисчĕсен моторизованнăй отрячĕ пырса çитнĕ те, сыхăнăва йĕркелеме тытăннă. Сисмен çĕртен партизансем фашистсене пеме пуçласа, нимĕçсен 12 связистне вĕлернĕ. Тăшманăн икĕ автомашинине тата 4 мотоциклне пĕтерсе тăкса, партизансем нимĕç связисчĕсен проводисемпе инструменчĕсене лачакана пăрахса путарнă.

Великий Лог ялĕнчен инçех мар выранта колхоз правленийĕн членĕ О. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отряднăй боецсем Германи штабĕн икĕ автомашинине ярса тытнă. Нимĕçсен 8 офицерне вĕлернĕ хыççăн, партизансем машинăсене çунтарса янă. Черемшина ялĕнче ĕлĕх кулак пулнă çын нимĕç офицерĕсемпе сыхăнса колхозри активистсене фашистсенĕ тытса пани çинчен хресченсем сентябрĕн 7-мĕшĕнче партизансене пĕлтернĕ. Партизансен отрячĕ çав кунах Черемшина ялĕ çине пырса тапăннă. Партизансем сасартăк пырса кĕрсе нимĕç салтакĕсене пĕтерсе тăкнă. Сутăнчăка партизансем арестленĕ те, площаде илсе тухса ăна пĕтĕм халăх умĕнче суд тунă. Партизансен отряднăй боецсем тата суд вăхăтĕнче пулнă мĕнпур колхозниксемпе единоличниксем пурте пĕр шухăшлă пулса йышăннă решени тăрăх, çак предателе персе вĕлермелле тунă. Приговора çавăнтах пурнăçа кĕртнĕ.

Сысна фермин заведующийĕ Анна С. командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ Афанасово ялĕнчен хĕвелтухăç еннелле 4 километрта нимĕçсен 18 обозне тытса илнĕ. Лавçисене тата охранăри салтаксене пурне те вĕлерсе, партизансем консервăсем, индивидуальнăй пакетсем тата ытти медикаментсем тултарнă 100 ытла ещĕке вăрмана илсе кайса пытарнă.

* * *

Норвеги патриочĕсем фашистла захватчиксене хирĕç кĕрешессине вăйлатнă. Эгерзундран çурçĕр еннерех нимĕçсем кăçал çулла çĕр айĕнче аэродром, горючипе боеприпассем тытса усрамалли складсем тунă, зенитнăй батарейăсене курăнмалла мар вырнаçтарса лартнă. Сентябрĕн пирвайхи кунĕсенче нимĕçсен аэродромĕпе батарейисем çине Норвеги патриочĕсен пысăк группи тапăннă. Нимĕçсем вĕсен секретлă объекчĕ çине тапăннине тимлĕн пытараççĕ. Анчах та çавăн пек тапăннине пула склада сиктерсе яни, аэродрома чылаях сиен кӳни тата 7 бомбардировщика çĕмĕрсе тăкни пуринчĕн те палламăсть. Тăвата зенитнăй орудине çĕмĕрнĕ. Склада сиктерсе янă чух салтаксемпе офицерсем нумай пĕтнĕ.

Ставангер-Саннес чугунçул сыпăкĕнче диверсие пула таврăлă поезда крушени пулнă, вăл поезд çинче фашистсен Мейри тата Флеккефьордри гарнизонĕсем валли илсе каякан çар грузĕсем пулнă. Нумай ещĕксем çĕмĕрĕлнĕ, вĕсен ăшĕнче самолетсем валли запаслă пайсем тата хĕçпăпал пулнă. Жандармсен отрячĕ пыриччен запаслă пайсене чылай çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Совет искусствин работникĕсем фашистла варварсене хирĕç ним хĕрхенмесĕр кĕрешес ĕçе хăйсен вăйĕсене патриотла пысăк хавасăлпа параççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăрса тискер тăшмана хирĕç кĕрешеççĕ. Искусствăн нумайĕш работникĕсем фронт валли ĕçлеççĕ. Искусствăн Ленинградри работникĕсем Хĕрлĕ Çарпа Флот валли 3500 концерт организацилеленĕ тата фронт линийĕнче 110 ытла спектакль лартса панă. Мускавпа Мускав облаçĕнчи артистсем 3800 концерт ытла панă. Боецсем валли панă концертсенче СССР халăх артисчĕсем Барсова, Козловский, Рейзен, Пирогов, Михайлов юлташсем, Республикăн халăх артисчĕсем Турчанинова, Ливанов, Гоголева, Топорков юлташсем тата çĕршер çамрăк артистсем хутшăннă. РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Хенкин юлташ ертсе пыракан Мускаври артистсен бригадисенчен пĕри çак кунсенче Действующи армирен тавăрăннă. Фронтра пулнă 15 кун хушшинче çак бригада 50 концерт кăтартнă. Хĕрлĕ Çăран боецĕсемпе командирĕсем валли Киеври эстрадăпа миниатюра театрĕ ăнăçлăн ĕçлет.

Совет Союзĕн композиторĕсем фронт валли çĕнĕ юрăсемпе маршсем нумай панă. Композитор А. Хачатурян «Песня о капитане Гастелло» ятлă юрă çырнă. Мариан Коваль «Народная священная война» ятлă пысăк произведени-оратори çырнă. Вано Мурадели совет çыннисен героизмне тата вĕсем хăйсен аслă тăван çĕршывне чĕререн юратнине кăтартакан «Отец и сын» ятлă баллада çырнă. СССР халăх артисчĕ Глиэр «Красная Армия» ятлă марш çырнă. Сталинла премăн лауреачĕ Н. Я. Мясковский оборона темипе темиçе юрă çырнă.

Болгари хаçачĕн ăслă мар суйи

СТАМБУЛ, сентябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Тĕнчери пичет Германи фашисчĕсене Ельня патĕнче çĕмĕрни тата вĕсем выраççен çав ĕлĕкхи хулинчен нимĕн йĕркесĕр тухса тарни çинчен паллă турĕ.

Анчах, Болгарири «Дневник» хаçат, гитлеровецсем умĕнче ыр ятлă пулас тесе «положение тӳрлетме» йышăннă, çав хаçатăн вулаканĕсем вара, совета хирĕçле юптарусене хăнăхса çитнĕскерсем, ĕнер «нимĕçсем 26 кун хушши çапăçнă хыççăн Ельняна йышăнса илнĕ» тесе çырнине вуласан тĕлĕнсе кайнă.

Вырăнти журналистсем хушшинче çапла кăтартса параççĕ: «Дневник» хаçат сĕмĕрле тата ăссăрла суйини пурне те тарăхтарнă.

Англи авиацийĕ Итали çине пырса тапăнни

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: сентябрĕн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем корелевтсвăн Турин хулинчи (Италия) арсеналĕ çине бомбăсем питĕ вăйлăн пăрахнă. Пысăк пушарсем тухнă. Пырса тапăннă çĕре йывăр бомбардировщиксем нумайăн хутшăннă.

Англи бомбардировщикĕсенчен тăваттăшĕ хăйсен базине тавăрăнман.

(ТАСС).

Кассель çине бомбăсем пăрахни

Сентябрĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин çĕре яхăн бомбардировщикĕ Кассель çине пырса тапăннă. Унта Хеншелĕн паровозсем юсакан пысăк завочĕсем вырнаçса тăраççĕ.

Кунсăр пуçне, Хĕвелтухăç Германири Мюнстер тата ытти пунктсем çине пырса тапăннă. (ТАСС).

Конфликта пĕтермелли условисем çинчен Иран правительстви йышăннă решенине Меджлис ырланă

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Иранăн çĕнĕ правительстви августăн 28-мĕшĕнче хăйĕн çĕршыври мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене Совет тата Англи войскисене кирек мĕнле хирĕç тăрассине те чарса лартма приказ пани тесе маларах пĕлтернĕччĕ. Кун хыççăн пĕр енчен — ССР Союзĕпе Великобритани правительствисем, тепĕр енчен — Иран правительстви хушшинче пулса иртнĕ калăçусене пула, Иран войскисенĕ хăшпĕр районсенчен аякках куçарса тăратасси çинчен тата çав районсене Совет тата Англи войскисене йышăнтарасси çинчен килĕшӳ тунă. Çак килĕшӳ тăрăх совет войскисем: Ушну местечки (Резайе кӳллинчен кăнтăр-хĕвелтухăç еннелле) — Миандоаб — Зенджан — Казвин — Хорремабад (Каспий тинĕсĕн кăнтăр çыранĕ) — Баболь — Зираб — Семнан — Шахруд тата хĕвелтухăçĕнче Али-Абад линийĕнчен çурçĕререхри районсене, çавăн пекех Мешхед хулин районне йышăнă.

Çав килĕшӳ тăрăх Англи войскисем: Ханекин—Керманшах — Хорремабад—Месджеде-и — Сулейман — Рам—Хормоз — Бендер — Дейлим пункчĕсем урлă каçакан линирен кăнтăр тата хĕвеланăç еннелле вырнаçмалла. Çавăн пекех Иран правительстви Германи, Итали, Румыни, Венгри миссийĕсене Иран çĕршывĕн талккишĕнчен кăларса яма тата немĕç колонийĕн членĕсене интернировать тумашкăн Англи тата Совет правительствисен аллине пама, çавăн пекех Германи подданнăйĕсенĕ Иран территорине кĕме ирĕк памалла мар тума сăмах панă. Иран правительстви çавăн пекех нейтралитет тытса пыма тата ССР Союзĕпе Англине вĕсен гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешĕвĕнче сиен кӳме пултаракан кирек мĕнле утăм тăвассинчен те чарăнса тăма хăй çине обязательство илнĕ. Çакăнпа пĕрлех Иран правительстви ССР Союзĕпе Великобританине Иран территорийĕ урлă тавăрсем тата çар снаряженийĕсем турттарма чăрмантармалла мар тума, çав тавăрсене шоссе çулĕсем, чугунçулсем, сывлăш çулĕсем тăрăх турттарса вырăна çитерес ĕçре ССР Союзĕпе Англине пулăшу пама килĕшни çинчен пĕлтернĕ, çавăн пекех Иранпа Совет Союзĕ хушшинче нефть концессийĕ çинчен тунă договор тăрăх нефть каларакан Кевир—Хурнан участокĕнчи ĕçсене аталантарса пынă çĕрте пулăшу пама тата Иранпа Совет Союзĕ хушшинче пулă тытас ĕç пирки тунă договор тăрăх Каспий тинĕсĕн кăнтăр енче пулă тытас ĕçе аталантарса пынă çĕрте пулăшу пама пулнă.

Хăйсем енчен Совет правительствипе Великобритани правительстви Ирана унăн экономикăллă нушисене тивĕçтерсе пырас ĕçре пулăшу пама пулнă. Кунсăр пуçне Совет правительстви Совет Союзĕпе Иран хушшинче 1927 çулти октябрĕн 1-мĕшĕнче тунă договор тăрăх Каспий тинĕсĕн кăнтăр енче пулă тытас ĕçе концесси йĕркипе туса пынăшăн Ирана тивекен взноссене тӳлесе пыма сăмах панă. Великобритани правительстви вара нефть участокĕсене тара илнĕшĕн Ирана тивекен тӳлевсене çĕлĕк мĕнле пулнă çавăн пекех тӳлесе пыма сăмах панă.

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче Меджлисăн Чрезвычайлă заседанийĕнче ССР Союзĕпе тата Англипе пулса иртнĕ калăçусем çинчен Иран правительствин отчетне итленĕ. Отчетлă доклада ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Сохейли туса панă, вăл Совет Союзĕпе Англи правительствисем Иран правительствине августăн 30-мĕшĕнче панă нотăсене тата Иран правительстви çав нотăсем çине сентябрĕн 1-мĕшĕнче панă ответа, çавăн пекех Совет Союзĕпе Англи правительствисем сентябрĕн 6-мĕшĕнче панă нотăсене тата Иран правительствин сентябрĕн 8-мĕшĕнче панă ответлă нотине вуласа панă. Ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Сохейли Меджлиса, Совет Союзĕпе Англи правительствисен çӳлте кăтартса панă нотисенчи условисене Иран правительстви пĕтĕмĕшпех йышăннă тесе пĕлтернĕ. Меджлис Иран правительствин решенине ырланă тата правительство çине шанса тăни çинчен каласа хăварнă.

Черчилль общинăсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер общинăсен палатинче премьер-министр Черчилль вăрçă ĕçĕсене обзор туса, сăмах тухса калана. Вăл малтан хăйĕн сăмахĕнче Рузвельтпа тĕлпулни çинче чарăнса тăрса, вĕсем вăрçă тĕлĕшпе тăвата тĕп ыйту тăрăх килĕшӳ тунине çинчен кăтартса панă. Пĕрремĕшĕнчен, принципсемпе тĕллевсем çинчен 8 пунктран тăракан декларацие йышăннă, хальхи вăхăтра Англипе США çав принципсемпе тĕллевсем тăрăх ĕçлесе пыраççĕ, иккĕмĕшĕнчен, гитлерла тапăнăва хирĕç кĕрешес ĕçре Российăна пулăшмă мероприятисем туса хатĕрленĕ, виççĕмĕшĕнчен, Япони тĕлĕшпе тăракан политикăна палăртнă, «Инçет-Хĕвелтухăçĕнче Англипе Пĕрлешӳллĕ Штатсен интересĕсене хăратса тăракан малашнехи агрессине пĕтерме май пулсан, мерăсене вăхăтра йышăнса, вăрçă Лăпкă океана сарăлса каяссине чарса лартмалла», тăваттăмĕшĕнчен, технически нумай ыйтусем сӳтсе-явнă. Черчилль уйрăмах çакна палăртнă: Англипе Америка пĕрле йышăннă декларацин улттăмĕш параграфĕнче «национал-социалистла тиранине пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнă хыççăн» тенĕ сăмахсем çав декларацин тăван характерне кăтартса парăççĕ.

Малалла Черчилль Атлантикăшăн пыракан çапăçусем çинче чарăнса тăнă. Вăл июль тата август уйăхĕсенче Англин тата союзниксен флочĕн сухатăвĕ Германипе Итали флочĕсем тунă сухатусен виççĕмĕш пайĕнчен кăшт ытларах шутланать, тесе палăртнă. Çакă вăл çĕнĕ тактикăпа — çыранри оборона авиацийĕ, бомбардировочнăй авиаци тата подводнăй лодкăсем туса пыракан çĕнĕ тактикăпа усă курнине пула пулнă. Çавăнпа пĕрлех Черчилль Атлантикăшăн пыракан кĕрешӳре выляса илнĕ тенĕ шухăша сирсе пăрахмалла, мĕншĕн тесен Гитлер США-ран Атлантика урлă çар материалĕсене кӳрсе килессине пур майсемпе те чăрмантарма пăхать, тесе паллă тунă.

Малалла Черчилль Иракри, Сирири, Ливири операцисен тĕплĕ обзорне туса панă. Вăл çапла паллă тунă: Сирине Нил çарĕсем оккупацилени Кипра хăрушлăхран кăларнă: Англи Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç бассейнĕнче тинĕсре тата сывлăшра контроль туса тăни витĕмлĕ пулса тăчĕ, вăйланчĕ, тенĕ. «Эпир,—тенĕ Черчилль,—пирĕн Турции туссемпе тӳррĕмĕнех сыхăну тытса ĕçлессине йĕркелерĕмĕр тата нефтепроводсене тата ытти ресурссене контроль туса тăрассине хамăр алла илтĕмĕр». Нил çарĕ Италипе Германин Киренаикăна тытса илнĕ вăйĕсене хĕвелтухăç флангĕнчен вăйлăн пыра-пыра çапнă. Нимĕçсем май уйăхĕн вĕçĕнче Суэц каналĕн районĕнче пулатпăр, тесе мухтанса пĕлтерни пушă сăмах кăна пулса юлчĕ. Юлашки вăхăтра Нил çарĕ вăйлă подкреплени илчĕ, тесе пĕлтернĕ Черчилль тата Германия Хĕвеланăç пушхирĕ урлă тапăнса кĕрессинчен англичансем Египета ăнăçлăн хӳтлеме пултараççĕ, тесе шантарса каланă.

Ун хыççăн Черчилль Хĕвелтухăç фронтĕнчи кĕрешӳн ыйтăвĕсем çине куçнă.

Вăл çапла пĕлтернĕ: вырăс çарĕсем чаплăн хирĕç тăни Гитлер Российăна хирĕç пуçланă вăрçа кĕске срокра вĕçлеме шаннине сирсе ярать. Гитлер Германи салтакĕсен юнне, иртнĕ вăрçăри пĕр çул хушшинчен те нумайрах юхтарчĕ. Унăн халех хăйĕн çарне вырăссен сивĕ хĕл условийĕнче, вырăс çарĕ хăюллă контрударсем тунă чухне мĕнпур фронтра—Арктикăран пуçласа Хура тинĕс патне çитиччен тытса тăмалла пулать. Англипе Америка тата ССР Союзĕ хушшинче пулса иртекен канашлăвăн задачи—совет çарне малашне кирлĕ хатĕрсем çителĕклĕ парса пулăшасси, тесе пĕлтернĕ Черчилль. Çав канашлура Америка делегацине Гарриман тата Англи делегацине Бивербрук ертсе пырать. Пирĕн,—тенĕ Черчилль,—хамăр валли боеприпассем çителĕклĕ туса кăларма, çавна май Российăн нушисене тивĕçтерме пысăк жертвăсем тума хатĕр тăмалла». **(Алă çупаççĕ).**

Иран пирки йышăннă мероприятисем çинче чарăнса тăрса, Черчилль çав мероприятисене Германин çав çĕршыври махинацийĕсене арпаштарса яма туса иртернĕ, тесе кăтартса панă. Черчилль Иран правительстви умне «тевтонла посетительсене» хăвăртрах Иранран хăваласа яма, унта пулнă немĕçсемпе итальянецсене тытса пама ыйтса требовани тăратнă. Пирĕн,—тенĕ Черчилль,—Германин тата Италин миссийĕсене Иранран хăваласа калларттармалла тăвас пулать.

Хăйĕн обзорне вĕçлесе, Черчилль çапла каланă: хальхи вăхăт хаваслантаракан сăмахсем каламалли вăхăт мар, апла пулсан та Англи çаплах «хăйĕн ăраскалĕн тата хăйĕн чĕрин хуçийĕ» пулса тăрать, тесе калама пултарать.

Пĕлтерӳ

Сентябрĕн 15-мĕшĕнче, каçхине 7 сехет те 30 минутăра, Пионерсен Дворецĕнче Шупашкар хулинчи хĕрарăмсен активĕн пухăвĕ пулать.

Кун йĕркки:

1. Хĕрарăмсен фашизма хирĕçле митингĕ пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсене чĕнсе калани. (Докладчикĕ РСФСР Верховный Совечĕн депутачĕ П. И. Калинкина юлташ).

Пуçламăш парторганизацисен секретарĕсен, фабрикăсемпе заводсенчи месткомсен председательĕсен, урамсенчи, кварталсенчи комитетсен председательĕсен пуху çинчен тĕплĕн пĕлтермелле, пухăва хĕрарăмсен активне пурне те пымалла тăвас пулать.

ВКП(б) горкомĕ.
Горисполком.

Ответлă редакторăн обязанноçĕсене туса пыраканĕ С. К. КОНСТАНТИНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5566

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 413. Ф. б. 98×84 п. л.